# Петĕр Хусанкай



*Чăваш халăх поэчĕ*

"Эп çуралтăм та аннен пĕрремĕш тата юлашки ачи пултăм. Ман ылтăн çупкăнăм, ман иксĕлми сĕткен тесе çупăрлатчĕ вăл. Кусем аннен чи ачаш сăмахĕсемччĕ..."

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулхи кăрлач уйăхĕн 9(22)-мĕшĕнче Тутарстан Республикинчи Элкел районĕнчи Сиктĕрме ялĕнче çуралнă.

"Пирĕнтен пĕр аллă çухрăмсенче, çурçĕр-хĕвел тухăçнелле, Атăл çи Пăлхар патшалăхĕн паллă хули Пÿлерччĕ (хальхи Билярск), пĕр çирĕм çухрăм хĕвел анăçнелле – Сувар хуличчĕ, тепĕр тăхăр вунă çухрăм çурçĕр-хĕвел тухăçнелле кайсан Атăл хĕрринче вара – пурте пĕлекен "аслă хула" Пăлхарччĕ.

... Унта авалхи чăвашсен тĕн йăлипе учÿксем ирттеретчĕç, вилнисене асăнса чÿклетчĕç, вăйă картисемпе уявсем пулатчĕç. Юрăсенче пăлхар патшин Алмушăн, Пÿлер паттăрĕн Валем хуçан ячĕсене асăнатчĕç.

Пурнăç хăй йĕркипе пыратчĕ. Çичĕ çулта чухнех эпĕ йĕнерсĕрех, ĕсенкĕсĕрех лаша çине утланса чупаттăм, выртмана çÿреттĕм... ялти пур тантăшсем пекех уйра вир çумлаттăм, кантăрпа йĕтĕн тататтăм, тырă выраттăм..."

... Çапла çырнă 20 çулти çамрăк Петĕр Хусанкай поэт, тăван килĕн урати урлă каçнă каçманах.

Кунсăр пуçне ял шкулĕн сакăр класĕ, малтанхи сăввисем, ал вĕççĕн çырса кăларнă журналсем пулнă, Иван Яковлев тăрăшнипе 1908 çулта кун çути курнă "Чăваш юмахĕсемпе халапĕсем" кĕнекери тăван поэзин вуласа тăранайми сĕтеклĕ те илемлĕ йĕркисем... Çак ача чăн-чăн поэт пулса ÿснинче унăн малтанхи вĕрентекенĕн, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ăс пухнă Наталья Яковлевна Яковлевăн тÿпи те пысăк...

Каярахпа – Хусанти Чăваш педтехникумĕ, "Сунтал" журналти, "Утăм" альманахри тата ытти кăларăмсенчи пĕрремĕш хайлавсем. "Кăнтăра ыткăнни" унăн çĕр-шыв тăрăх пĕрремĕш хут çул çÿрени пулнă: Вăтаçĕр Ази, Туркмени, Баку, Кавказ... Кайран каллех Хусан. 1927–1930 çулсенче Хусанкай – Тухăç педагогика институчĕн студенчĕ, Чăваш писателĕсен "Канаш" союзĕн Хусанти ячейка членĕ. Вăл хавхалансах чаплă тюркологăн Н.И.Ашмаринăн, паллă чĕлхеçĕн В.Г.Егоровăн, чăвашсен пĕрремĕш профессорĕн Н.В.Никольский этнографăн, Г.И.Комиссаров-Вантер культурологăн лекцийĕсене итленĕ; тутар çамрăкĕсен юратнă поэчĕсемпе Адел Кутуйпа, Хади Такташпа тата Хасан Туфанпа чунтан калаçнă, кирлĕ чух тавлашнă та. 1928 çулхи хĕлле Владимир Маяковскийпе тĕл пулни – Петĕр Хусанкай пултарулăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ те асра юлмалли самант. Çав çулах унăн пĕрремĕш кĕнеки, "Уяртсан", кун çути курнă.

Мускавра тухакан тĕп чăваш хаçачĕн "Коммунарăн" корреспонденчĕ пулнă май поэт Магниткăра, Горький автозавочĕ тунă çĕрте, Донбасс шахтерĕсем патĕнче пулса курнă. Çав вăхăтрах вăл куçару ÿнерĕн сăвапла ĕçне кÿленет. Поэт тăрăшнипе Пушкинăн "Евгений Онегинĕ", Грибоедовăн "Ăса пула инкекĕ" тата ыттисем чăвашла янăраса каяççĕ.

Хусанкай лирикин иккĕмĕш хумĕ "хĕрĕхмĕш, синкерлĕ..." çулсемпе тÿр килет. Тăван çĕр-шыва хÿтĕлекенсен ретне поэт 1942 çулхи ака уйăхĕнче тăнă. Çапăçу хирне Дон фронтĕнче (каярахпа вăл Сталинград фрончĕпе пĕрлешнĕ) ахаль рядовой салтак пулса кĕнĕ.

Хусанкай вăл вăхăтра политработник та, дивизи хаçачĕсен литература сотрудникĕ те пулнă. Вăрçă лирики те, чи вичкĕн хайлавĕсем те – "Таня" (1942) поэмăпа "Аптраман тавраш" сăвăлла романĕ – çав çулсенче çуралнă.

... Поэт Украинăн çунса кĕлленнĕ уйĕсем витĕр тухать, Польшăна ирĕке кăларма хутшăнать (Брянск, Белоруссин 2-мĕш, Украинăн 1-мĕш фрончĕсем). 1944 çулта вăл йывăр аманать.

Петĕр Хусанкайăн пултарулăх уçлăхĕ 50-60-мĕш çулсенче татах та сарălса, çĕнелсе каять. Вăрçă хыççăн поэта çĕр-шывăн анлăшĕ асамат кĕперĕн йăлтăр çутисем витĕр курăнма тытăнать, пĕрремĕш хут унăн çул çÿрев йĕрĕ ют çĕр-шывсен енне туртăнать. Поэт пултарулăхĕ çĕнĕ тÿпеме – шухăш вĕççĕрлĕхне – пур енлĕн çаварса илет. Петр Петрович хавхаланăвĕ халăх шухăш-кăмăлĕпе, туйăмĕпе пĕр килет.

Хусанкай поэзийĕнче 60-мĕш çулсенче нацисен хушшинчи туслăх теми вăй илет. Çĕнĕ çĕр-шывсемпе çынсем, çĕнĕ асаилÿсемпе кăмăл-туйăмсем тĕрлĕ ярăм йĕркелеме хистеççĕ. Çав вăхăтрах поэт чăваш нисеппе тĕнче курăмне уçса паракан "Тилли юррисене" кăларать, вĕсене вăл 1939-1940 çулсенчех çырнă пулнă. Кунта поэт хăй саманинчи çынсемпе халăх юррин таса çăл куçĕ урлă калаçать.

Хусанкай пултарулăхĕн тепĕр пысăк ÿсĕмĕ – "Хушка хумсем" ярăм (1963). Пурăннăçемĕн вăл халăх кун-çулĕ çине çаврăна-çаврăна пăхать, поэзири хăй хывнă пайтана тĕпкĕчлĕ хаклать. Несĕлсен умĕнче ĕмĕр татăлми парăмра пулнине туйса илет, халăх юррин мăнаçлăхĕпе çивĕч те тарăн ăсĕ умĕнче пуç таять. Килес çĕнĕ чăн-чăн поэт çинчен ĕмĕтленет, хăйĕн юлашки сехетне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленет: "Эпир, пулнă, пур, пулатпăр!" – тет.

**Атнер П.ХУСАНКАЙ, Сергей ЖУРАВЛЕВ.**